Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

6 (7967) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 25-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ӳсĕмсем татах та хавхалантараççĕ

Пултаруллисем – стипендиатсем



***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Егор Ярухин кăçал Муркашри вăтам шкултан вĕренсе тухать. Питĕ хастар та тăрăшуллă каччă «пиллĕксемпе» кăна вĕренет. Хими тата биологи предмечĕсене ыттисенчен ытла кăмăллать. Çавăнпах ĕнтĕ республика шайĕнчи биологипе иртнĕ олимпиадăсенче пĕрре мар малти вырăнсем йышăннă, ОБЖ предмечĕпе те.***

***Обществăлла пурнăçра та Егор яланах активлă. Унăн волонтер кĕнекинче чылай ырă ĕç туни çинчен çырса хуни пур. Ытларах – сывă пурнăç йĕркине сарассипе çыхăннисем. Ырă ĕçсем туни, вĕренӳри ӳсĕмсем ăна татах та хавхалантараççĕ, çĕкленӳллĕ кăмăл парнелеççĕ.***

*Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.*

## Кандидачĕсем паллă. Кама шанĕç район администрацине ертсе пыма?

***Хаçатăн 2011 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнчи номерĕнче район администрацийĕн пуçлăхне суйлассипе конкурс комиссийĕ конкурс ирттерессипирки пĕлтернине тата унăн условийĕсене пичетленĕччĕ. Район пуçлăхне суйлас ĕçсем çак вăхăта мĕнле пыни пирки конкурс комиссийĕн секретарĕ Л.Ю. ТАРАСОВА каласа пама кăмăл турĕ:***

– Условисемпе килĕшӳллĕн район администрацийĕн пуçлăхне суйланас текенсен конкурс комиссине 2012 çулхи январĕн 21-мĕшĕнчен кая юлмасăр, 17 сехетчен, заявленипе ытти кирлĕ документсене çитерсе памаллаччĕ.

Çак йывăр çĕклеме хăйсем çине илес текенсем пурри шанăç çуратать. Çапла вара 2012 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче район администрацийĕн 308-мĕш пӳлĕмĕнче 10 сехетре район администрацийĕн пуçлăхне суйлассипе конкурс комиссийĕн ларăвĕ иртет.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ пулма хăйсен кандидатурисене çаксем сĕннĕ тата вĕсене регистрациленĕ:

1. Никитин Владимир Германович, Муркаш район администрацийĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çуртйĕрпе комммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ.

2. Касьянов Анатолий Калистратович, Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерствин «Опытное лесничество» КУ, Ильинка участокĕн лесничествин лесничийĕ.

3. Мефодьев Владимир Венедиктович, «Фэнстер» ООО, директор.

4. Тимофеев Ростислав Николаевич, «Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕ, председатель.

5. Ямангеев Владимир Владиславович, хресчен (фермер) хуçалăхĕ, ертӳçĕ.

6. Туритов Иссаул Васильевич, уйрăм предприниматель.

7. Макаров Евгений Дмитриевич, Суд приставĕсен Федераллă службин Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçин çумĕ.

Кандидатсене пурне те ăнăçу сунатпăр. Çапах та комисси чи тивĕçлине Муркаш район администрацине ертсе пыма шанĕ.

Комисси сĕннĕ кандидатурăна хыççăн депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕнче çирĕплетĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Жеребьевка

### Объявление

**о проведении жеребьёвок по распределению платных печатных площадей, предоставляемых газетой «Çĕнтерӳ ялавĕ» для предвыборной агитации при проведении выборов Президента Российской Федерации и дополнительных выборов в органы местного самоуправления в Чувашской Республике.**

Жеребьёвка на платной основе проводится 30 января 2012 года в 14 час. в редакции газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 9 А, кабинет главного редактора.

На жеребьёвку приглашаются зарегистрированные кандидаты или их доверенные лица, уполномоченные представители кандидатов.

Результаты жеребьёвки оформляются протоколом. Платная печатная площадь предоставляется на основании договора.

Телефон для справок: 62-1-36.

Саламлатпăр



Савнă мăшăра, юратнă аттене, ырă кăмăллă кукаçие – **Николай Ферапонтович ФЕДОРОВА** сумлă юбилей ячĕпе чунчĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир сана юрататпăр, эс пурришĕн савăнатпăр, санпа мухтанатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе ывăлĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**

Хушу

## Черетлĕ 15-мĕш лару

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2012 çулхи январĕн 20-мĕшĕнчи 19 № хушăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 15-мĕш ларăвне район администрацийĕн ларусен залĕнче 2012 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче 15 сехетре пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине çак ыйтусене кĕртнĕ:

– Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн должноçне пурнăçлаканне палăртассипе ирттернĕ конкурс итогĕсем çинчен;

– Чăваш Республикинчи Муркаш район администрацийĕн пуçлăхне контракт йĕркипе должноçе çирĕплетесси çинчен;

– Муркаш район пуçлăхне – депутатсен Муркаш районĕнчи Пухăвĕн председательне Чăваш Республикинчи Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕпе контракт тума сĕнӳ тăратасси çинчен.

Кун йĕркине кĕртнĕ ытти ыйтусем хушшинче депутатсен районти Пухăвĕн район бюджечĕпе çыхăннă уйрăм йышăнăвĕсене улшăнусем кĕртесси, уйрăм йышăнусене пăрахăçласси çинчен т. ыт. те.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвне район администрацийĕн структура подразделенийĕсен ертӳçисене, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, районти предприятисен, организацисен тата учрежденисен ертӳçисене йыхравлаççĕ.

Республикăра

## Халăх штабĕ – Путиншăн

Чăваш Республикинче Раççей Федерацийĕн Президенчĕн кандидачĕн Владимир Путинăн суйлав умĕнхи халăх штабĕ ĕçлеме пуçларĕ. Вăл Шупашкарти Ухсай Яккăвĕ ячĕллĕ Культура керменĕнче вырнаçнă. Ертӳçи – мухтавлă ентешĕмĕр, саппасри генерал-лейтенант, Раççей Геройĕ Николай Гаврилов. Штаб йышĕнче çĕр-шывра тата тăван республикăра ырă ят çĕнсе илнĕ çынсем: сывлăх сыхлавĕнче тăрăшакансем, ял хуçалăхĕпе промышленноç, культура, вĕрентӳ ĕçченĕсем, çамрăксен тата ветерансен юхăмĕн ертӳçисем...

Çак кунсенче штаб хăйĕн анлă ларăвне ирттернĕ. Унта республикăри хуласемпе район центрĕсенче тĕл пулу кĕтесĕсем, тавлашу клубĕсем уçма, тĕрлĕ мероприяти ирттерме палăртнă. Паллах, вĕсенче кандидатăн суйлав умĕнхи программипе паллаштарасси тĕпре пулĕ.

Кĕскен

## Махмуд Аббас килнĕ

Палестина ертӳçи Махмуд Аббас пирĕн республикăна виçĕ кунлă визитпа килсе çитнĕ. Вăл Чăваш Енпе Палестина хушшинчи çыхăнусене аталантарас ыйтусене сӳтсе явать.

Пĕрремĕш кунне Махмуд Аббас ЧР Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă. «Куç микрохирургийĕ» центрпа паллашнă. ЧПУ студенчĕсемпе тĕл пулнă. Тĕн ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.

## Ĕçлĕ çыхăну çирĕпленет

Республикăри Министрсен Кабинечĕпе Мускав правительстви суту-илӳпе экономикăра, наукăпа техникăра, культурăра 2012 – 2014 çулсенче çыхăнса ĕçлесси çинчен килĕшӳ тунă.

Чăваш Ен Мускавшăн яваплă партнер пулнине асăннă Сергей Собянин. Уйрăмах пахалăхлă ял хуçалăх продукцийĕ тăратнине палăртнă.

2010 çулта республикăпа тĕп хула хушшинчи тавар çаврăнăшĕ 5 млрд. тенкĕрен иртнĕ.

## Бизнеса аталантарма

ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей экономика аталанăвĕн министрĕпе Эльвира Набиуллинăпа тĕл пулнă, пĕчĕк тата вăтам бизнеса пулăшас ыйтусене сӳтсе явнă. Республика предпринимательствăна аталантарма федераллă хысна укçи-тенкине тивĕçес енĕпе пуçарулă ĕçлет. 2011 çулта республикăна 236 миллион тенкĕ килнĕ. Халĕ республика 2012 çулта патшалăх пулăшăвне тивĕçес ыйтупа тимлет.

Тĕл пулура культура, туризм, шыв хуçалăхĕн объекчĕсене федераллă программăсене кĕртес ыйтусене те сӳтсе явнă.

## Хушма пулăшу

ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей финанс министрĕпе Антон Силуановпа иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче тĕл пулса калаçса татăлнипе республикăна 900,3 млн. тенкĕ дотаци килнĕ.

Ăна бюджет учрежденийĕсен ĕçченĕсене ĕç укçи тӳлеме, халăха пособисемпе тата ытти социаллă тӳлевсемпе тивĕçтерме уйăраççĕ.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

Нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн 2011 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнчи 1415 № йышăнăвĕпе «Республиканская клиническая больница» патшалăхăн сывлăха сыхлас бюджет учрежденийĕн санитаркине **Елена Петровна МИРОНОВĂНА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерекен сферăра нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн 2011 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнчи 1420 № йышăнăвĕпе «Моргаушский автомобильно-технический сервис» уçă акционер обществин генеральнăй директорне **Леонид Дмитриевич ДМИТРИЕВА** район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

# Тĕп тĕллев – тăкаксăр ĕçлесси

Экономика



Районăмăрăн экономикăпа социаллă аталанăвне тишкерсен унăн хумĕсем çинче потребительсен обществисем уйрăмах курăмлă вырăн йышăнаççĕ. Вĕсенче суту-илӳпе пĕрлех, пытарма кирлĕ мар, тĕрлĕрен производство та кулленех вăй илсе пырать. Çăкăр пĕçерессипе, пĕремĕк-булка хатĕрлесси, кунти ĕçченсен тăрăшулăхĕпе сентре çине илемлĕ те паха тортсем, пылак шывсем кăларасси – йăлтах Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш райпо-вĕсен производстви...

«Мĕн-ха вăл культура?» – тесе ыйтсан, çынсенчен чылайăшĕ хуравне ял клубĕпе тата ташă-юрăпа çыхăнтарать. Ку вăл пирĕн çак таранччченхи шухăшлав. Юлашки çулсенче вара пурнăçăмăр тĕпрен улшăннине шута илсе культура пĕлтерĕшĕ те самай анлăланчĕ. Паян час-часах ял культури, апат-çимĕç культури, çĕр ĕç культури пирки, производство культури çинчен калаçни мала тухать. Ку енсем вара пирĕнтен кашнинех пырса тивеççĕ. Вĕсем çĕнĕ технологисене çул уçаççĕ, апла пулсан пирĕн пурнăçăмăрăн никĕсĕнчен тухса тăраççĕ. Ун пек шутласан культура пĕлтерĕшĕ пирĕн пурнăçра тарăнрах та тарăнрах тымар ярса пырать.

Муркаш райповĕ икĕ çăкăр пекарни тытнипе палăрса тăрать: Отарккăри тата Лантăшри çăкăр пекарнисем. Пĕрне мухтаса теприне хурлама çук. Кашниех сентресем çине паха продукци кăларассипе ырми-канми тăрăшать. Çавăнпа вĕсен ĕçĕпе паллашакансем те, кунти ырă тĕслĕхсене алла илсе малалла аталантаракансем те нумайăн савăнтарать.

Лантăш пекарнин пӳлĕмĕнче «Моргауши-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн технологĕпе Людмила Звонковăпа тата асăннă обществăн генеральнăй директорĕн çумĕпе Елена Васильевăпа калаçса ларатпăр. Цех ĕçченĕсем вара пĕр парти çăкăра кăмакаран кăларса теприне ун вырăнне лартаççĕ.

Иртнĕ çул асăннă пекарня пурĕ 489 тонна çăкăр-булка пĕçернĕ. Вăл шутран 302 тонна сушкăпа печени, 187 тонна сухари пĕçерсе кăларнă. Хăйсен ĕçĕшĕн нумай ырă сăмаха тивĕçнĕ. Çакăн хыçĕнче пекарньăра вăй хуракан кашни ĕçченĕн тӳпи пур.

– Ĕçченсен тăрăшулăхĕ савăнтарать. Ăна шута хурса эпир малашлăх планĕсене палăртатпăр, çĕнĕлĕхсем алла илме ĕмĕтленетпĕр, – сăпайлă калаçать Елена Кузьминична ĕç пӳлĕмĕнчен производство цехне тухнă май.



Çăкăр пĕçерекенсен шăкăл-шăкăл калаçăвĕ кунта производство линийĕ уксахламаннине çирĕплетет çеç. Акă эпир хăйсем патне çитнĕ чух 35 çул çăкăр пĕçерекен Надежда Николаевна Ивановăпа 30 çул унпа çума-çумăн вăй хуракан Римма Геннадьевна Петрова **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)** пулса çитнĕ чустана çăкăр чашкисене хуратчĕç. «Пирĕн продукцие халăх хакласа йышăннине эпир хамăр ĕçе малалла утăмлаттарнипе хуравлатпăр. Урăхла юрамасть. Халăх шанăçне тӳрре кăларас тесен çанă тавăрсах ĕçлес пулать», – терĕç çăкăр чĕресĕ патĕнчен пăрăнмасăр Надеждăпа Римма хăйсем ĕç культури çине тимлĕх уйăрнине уйрăммăн палăртса. Юнашар сĕтел çинче вара вĕсем кунта паян хатĕрлекен тĕрлĕ продукцин пуян ассортиментне **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)** курса савăнма тӳр килчĕ. Маттурсем!

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Çĕнни пурнăçа кĕрсе пырать

# Инвестор малашлăхĕ районпа çыхăннă




Район аталанăвне инвесторсене явăçтарасси – пĕлтерĕшлĕ ыйту. Муркаш ен инвесторсемшĕн хăйĕн илĕртӳлĕхне çултан-çул ӳстерни те вăрттăнлăх мар. Иртнĕ çул вара района харăсах икĕ çĕнĕ инвестор килсе ĕçе кӳлĕнчĕ. Пĕрремĕшсем унччен Ленин яч. хис. кооператив вырăнĕнче «Путь Ильича» агрофирма» чикĕллĕ яваплăхлă общество йĕркелесе кунта паянхи кун ыйтакан сĕт комплексне çĕклеме пуçларĕç. Иккĕмĕшĕсем Мускав – Хусан автотрасса çинче Юнкăпуç ялĕ çывăхĕнче автозаправка станцийĕ валли никĕс ячĕç. 2011 çул вĕçĕнче пĕрремĕшсем Мăн Шаптакри мăйракаллă шултра выльăхсен ферминче хăтлă та çĕнĕ стандартсемлĕ общежити хута ячĕç. Иртнĕ тунти кун вара, кăрлач уйăхĕн 23-мĕшĕнче, «Транзит Сити» чикĕллĕ яваплăхлă общество та автоçулсем хĕррипе вырнаçнă паянхи кун ыйтакан комплексăн пĕрремĕш пайне ĕçе кĕртрĕ. Çак кун савăнăçлă лару-тăрура автозаправка хăйĕн пĕрремĕш клиенчĕсене йышăнчĕ.

Çĕнĕ автозаправка уçăлнă ятпа ирттернĕ савăнăçлă пухăва Муркашсем енчен район администрацийĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан В. Калинин, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ - капиталлă строительствăпа архитектура тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В. Никитин, «Муркаш пасарĕ» МУП директорĕ Е. Субботин хутшăнчĕç. «Транзит Сити» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн генеральнăй директорĕ Р. Гаптельхаков хăнасене паянхи ĕç анлă малашлăхăн пĕрремĕш утăмĕ пулни пирки пĕлтерчĕ:

– М-7 автотрасса çумĕнчи паянхи пурнăç ыйтакан комплексăн пĕрремĕш пайĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Пирĕн автозаправка пахалăхĕ çывăх вăхăтрах водительсем хушшинче ырăпа анлă сарăласса шанатăп. Вĕсене вара пирĕн патăмăра килсен хăт та илем кĕтсе илтĕр тесе тăрăшăпăр. Çак тĕллевпе çывăх вăхăтрах пирĕн 100 çын вырнаçмалăх кафе, бар, кану çурчĕ уçăлмалла. Паянхи куна пулас комплекс валли 120 миллион тенкĕ хывнă пулсан, черетре татах 130 миллион тенкĕлĕх ĕç. Кунти ĕç вырăнĕсем вара йăлтах Муркашсем валли пулĕç, – терĕ ĕç-хĕлпе паллаштарнă май Ринат Назипович.

– Сирĕн район пире йышăннишĕн, аталанма çулсем уçса панишĕн район администрацийĕн пуçлăхĕ пулнă Ю. Иванова, унăн çумĕсене В. Калининпа В. Никитина пысăк тав. Район пире майлă пулнăран эпир те сире тĕкĕ парса ĕçлес кăмăллă. Çывăх вăхăтрах хамăр территорире ял хуçалăх таварĕсен пасарне уçма шухăш тытни çывăхри ялсенче пурăнакансем валли тата ял хуçалăх таварĕсемпе ĕçлекен предпринимательсемшĕн меллĕ пуласси пирки иккĕленместĕп, – паллаштарчĕ хăйсен планĕсемпе чикĕллĕ яваплăхлă обществăн коммерци директорĕ Р. Фатыхов.

– Хамăр район территорийĕпе иртекен федераллă çул пуррипе анлă усă курасси – пирĕн кулленхи тĕллев. Эсир пулăшнипе сирĕн тавра пирĕн ĕçченсем ĕçлеме пуçласан, сирĕн обществăра çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркеленсен, çакна курса района инвесторсем туртăнасси татах та хутшăнасси пирки иккĕленӳ çук, – терĕ тав сăмахĕ каланă май район администрацийĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан В. Калинин.

Автозаправка уçăлнă май йĕркеленнĕ çĕнĕ 20 ĕç вырăнĕнче тăрăшакансен куçĕсенче вара ырă малашлăх выляни курăнчĕ. Шанăç тӳрре килтĕрччĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

# Юр çийĕн çӳреме

Профилактика операцийĕ

Чăваш Республикин хăй тĕллĕн çӳрекен тата ытти тĕрлĕ тĕслĕ машинăсене тĕрĕслесе тăракан патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ В. Димитриев январĕн 19-мĕшĕнче «Снегоход» профилактика операцийĕ ирттерме приказ кăларнă. Операци январĕн 30-мĕшĕнчен февралĕн 24-мĕшĕччен иртĕ.

Пурнăç ырă еннелле улшăннăçемĕн уйрăм гражданcем те юр çийĕн çӳрекен техникăна (Снегоход) туянма пуçларĕç. Анчах вĕсенчен пĕр пайĕ кăна патшалăх техника надзор инспекцийĕнче регистрациленнĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн вара пысăк хăвăртлăхпа çӳрекен çав техника хуçисен техникăна туянсан 5 талăк хушшинче патшалăх техника надзорĕн инспекцийĕнче регистрациленисĕр пуçне çумра унпа çӳреме удостоверени (тракторист-машинистăн «А» категорийĕ) пулмалла. Кунсăр пуçне çулленех патшалăх техника надзорĕн инспекцийĕнче техника тĕрĕслевне тăрса унпа çӳреме ирĕк илмелле.

Асăннă операци тĕллевĕсемпе паллаштарăпăр, хуçисем техникăна вăхăтра регистрациленине, вĕсемпе хăрушсăрлăх правилисен требованийĕсене пăхăнса усă курнине тĕрĕслĕпĕр. Çакна валли кăçал тĕслĕхĕ те пулчĕ. Январĕн 2-мĕшĕнче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн территорийĕнче юр çийĕн çӳрекен техникăпа çӳренĕ чух асăрханусăр пулнипе тата унпа усă курас правилăсене сĕмсĕррĕн пăснипе инкек пулчĕ. Пĕтĕмлетӳ: «Снегоход» хуçи руль умĕнче хĕр ачине лартса пынă. Техника хатĕрĕ ямăна лексен хĕр пĕрчи йывăр суранланнă. Водителĕн удостоверени пулман, техникăна регистрацилемен.

Иртнĕ çул та республикăра çак операци вăхăтĕнче тĕрĕсленĕ техникăн пысăк пайĕ çирĕплетнĕ йĕркепе регистрациленменни, техосмотр тăманни, водительсем кирлĕ категориллĕ удостоверенисемсĕр пулни, регистрациленĕ документсемсĕр эксплуатациленни, патшалăх регистраци номерĕсемсĕр çӳрени палăрнă.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти пуçлăхĕ.**

01 пĕлтерет, асăрхаттарать

# Ӳсĕрле пирус туртсан...

Кăрлач уйăхĕн çурринчен иртрĕмĕр. Кун вăрăмланма тытăнни те куç кĕрет. Анчах пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмасан хĕл кунĕсем «хĕрлĕ автан» хуçаланнипе пысăк хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Апла пулсан асăрханулăха та çӳллĕрех шайра тытмалла. Çапла калатпăр, çакна пĕлетпĕр, анчах... Пушар хăрушсăрлăх правилисене хĕллехи вăхăтра пăхăнманни уйрăмах пысăк инкек патне илсе çитерет: вăй илнĕ «хĕрлĕ автан» тыткăнĕнче шартлама сивĕрех пурăнмалли çуртсем, витесемпе сарайсем, мунчасем кĕлленеççĕ, çынсен пурнăçĕ татăлать.

Халĕ каланине çирĕплетекен юлашки тĕслĕх. Çĕн Чемей ялĕнчи пĕр ватă çын хуçалăхĕнче иртнĕ шăмат кун 10 сехет тĕлĕнче пушар тухрĕ. 73 çулхи арçыннăн йывăç пӳрчĕ самантрах кĕлленчĕ. Ирĕке кайнă вут-çулăмпа кĕрешекенсем вăхăтра çитни те çулăм тыткăнне лекнĕ арçын пурнăçне çăлма пулăшаймарĕ. Пирус туртнинчен тухнă пушарта пурăнмалли çуртран çеç тăнă кил-хуçалăхран кĕл купи кăна юлчĕ.

Асăннă пушар кăçал 4-мĕш тĕслĕх пулчĕ. Танлаштарма, пĕлтĕр çак вăхăтра пулнă 5 пушарта 2 çын пурнăçĕ татăлнăччĕ.

Пурăнмалли çуртсене хутса ăшăтмалли тапхăрăн ытларах пайĕ умра. Çавăнпа та кил хуçисем пушар хăрушсăрлăх правилисене пĕр турткаланмасăр пурнăçласса шанас килет. Хамăр тăрăшсан çеç пирĕн пурнăç илемлĕрех пулĕ.

**А. ЕФИМОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ.**

# Иртнĕ çул итогĕсем

Муркаш районĕ йĕркеленнĕренпе 68 çул çитсе пырать. Çавна май ĕçчен халăхăмăрăн ял хуçалăхĕнчи пĕлтĕрхи ĕçĕсене цифрăсен куçĕпе пĕтĕмлетсе пăхар. Пурнăç утăмĕсемпе тан аталанса пыма тăрăшакан Муркаш Енĕ çĕнĕлĕхсенчен юлса пымасть. Район территорийĕ 84,5 пин гектар çĕр йышăнать. Вĕсенчен ял хуçалăх пĕлтерĕшлисем 63 пин гектар пулсан, сухаламалла çĕрсем 49,3 пин гектар.

Кăçалхи январĕн пĕрремĕшĕ тĕлне район çыннисен харпăрлăхĕнче 13320 хуçалăх шутланнă. Вĕсем тата 26 ял хуçалăх предприятийĕпе 99 хресчен (фермер) хуçалăхĕ район территорийĕнчи ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе туллин усă курса пыма тăрăшнă.

Мĕнле ĕçленĕ-ха вĕсем иртнĕ çул? Малашлăха пăхмалли ӳсĕмсем пур-и пирĕн? Ĕçсен пĕтĕмлетĕвне цифрăсен куçĕпе тишкерер-ха.

Районăн 2011 çулхи ĕç кăтартăвĕсене пăхсан ял хуçалăх предприятийĕсем çулталăк хушшинче пурĕ 399701,2 пин тенкĕлĕх продукци туса илни курăнать. Ку вăл унччченхи çулхипе танлаштарсан 110,8 процент. Уйрăммăн выльăх-чĕрлĕх тата ӳсен-тăран отраслĕсен ĕç-хĕлне тишкерер-ха. Пĕтĕмĕшле пăхсан кашни отраслех пĕлтĕр виçĕм çулхинчен тухăçлăрах ĕçлени куç умне тухать. Çакăнта хуçалăхсем Раççей Президенчĕ çул панă приоритетлă наци проекчĕпе ăнăçлă ĕçлени малта тăрать. Çавăнпа та пит хĕретмелли ех çук. Анчах çиччĕ виççе пăхмалли пирки те, çĕнĕ аталану çулĕсем шырамалли çинчен те манма кирлĕ мар.

Çулталăк хушшинче район чĕрĕ виçепе пурĕ 6288,2 тонна аш-какай туса илнĕ (виçĕм çулхипе танлаштарсан 104,1 процент). Вăл шутран: пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем 1655,8 тонна (113,2 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 179,3 тонна (147,3 процент), килти хушма хуçалăхсем 4453,1 тонна (100 процент). Сĕт сăвасси те пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчисемсĕр пуçне (8520,7 тонна е 93,3 процент) пĕтĕмĕшле малалла утăмланă: 42540,8 тонна е 100,5 процент. Вăл шутра хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 490,4 тонна (161 процент), килти хушма хуçалăхсем 33529,7 тонна (101,9 процент) продукци тунă.

2011 çулта пурĕ 77211,4 пин штук (120,2 процент) çăмарта илнĕ, мăйракаллă шултра выльăхсем талăксерен вăтамран 539 грамм (106,5 процент), сысначсем 391 грамм (127,4 процент) ӳт хушнă. Тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ ял хуçалăх предприятийĕсенче пĕтĕмпе 1984 пăру тата 11873 сысна çури илнĕ. Çăмарта тăвакан пĕр чăхăн çăмарта тăваслăхĕ 330 çăмартана çитнĕ.

Пĕрлешӳллĕ ял хуçалăх предприятийĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче тата килти хушма хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăхсен хисепĕ пĕтĕмĕш-ле ӳснĕ, 16273 пуçпа (100,5 процент) танлашнă. Çав вăхăтрах сысначсен, чăх-чĕпĕн, лашасен хисепĕ пур категориллĕ хуçалăхсенче те чакнă.

Ӳсен-тăран отраслне пăхсан çулталăк хушшинче район пĕтĕмпе 34,4 пин тонна (424,6 процент) тырă-пулă, 33,3 пин тонна çĕр улми (виçĕм çулхипе танлаштарсан 213,6 процент) пухса кĕртнĕ. Тĕш-тырă тухăçĕ 22,4 центнерпа (196,5 процент), «икĕмĕш çăкăр» тухăçĕ 118,4 центнерпа (134,7 центнер) танлашни хресчен çĕнĕлĕхсене алла илсе малалла талпăннине çирĕплетет.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

Ял тăрăхĕсенчи спорт

# Кубок – Орининсенчех

«Оринино» хуçалăх парнисемшĕн иртнĕ ăмăрту кăçалхипе 16-мĕш пулчĕ. Иртнĕ шăмат кун Орининри вăтам шкулти спортзала 9 команда пухăннă. Вĕсен шутĕнче – Шупашкарти троллейбус управленийĕнчен те. Куракансем хушшинче республикăн патшалăх тĕп инспекторĕ В. Димитриев, район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан В. Калинин, районти волейбол федерацийĕн ертӳçи В. Вязов тата ыттисем те пулнă.

Шашкăлла выляканcем хушшинче командăпа мала кил хуçисем тухнă, шахмат вăййинче те чи пултаруллисем вĕсемех пулнă.

Волейболла выляса вара Шупашкартан килнĕ хăнасем çĕнтернĕ. Иккĕмĕш вырăна «Оринино» хуçалăхăн команди, виççĕмĕш вырăна «Передовик» тухнă.

Пĕтĕмĕшле итогсем тăрăх кубок Орининсенчех юлнă.

**Хамăр инф.**

# Асăрханулă пулни никама та чăрмантармасть

## ГИБДД пĕлтерет, асăрхаттарать

Çул-йĕр çинчи инкексене пула пирĕн çĕр-шывра çулсеренех вуншар пин çыннăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлать. Акă пирĕн район территорийĕнче пулнă аварисенче те пĕлтĕр 13 çын вилнĕ. Ку вăл вăтамран та виçĕ çемьепе танлашать: пурăннă виçĕ çемье, сасартăк инкек – вĕсем çук та. Хамăрăн хăрушсăрлăх пирки, юнашар çынсемшĕн яваплă пулнине манни илсе пырать çакăн патне.

Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ, полици капитанĕ С. Иванов иртнĕ çул район территорийĕнчи çулсем çинче пурĕ 58 инкек регистрациленине пĕлтерчĕ. Вĕсенче пурĕ 83 çын суранланнă.

Аварисене ачасем лекни – уйрăм ыйту. Тарăн шухăшлаттараканни тата хăйсен ачисемшĕн малтанах ашшĕ-амăшĕ ответлă пулнине аса илтерекенни. Иртнĕ çул аварисенче пилĕк ача суранланнă. Пĕр инкекĕ Кашмашра пулса иртнĕ. Сăлтавĕ – ÿсĕр водитель. Тепĕр инкекĕн сăлтавĕнче – пысăк хăвăртлăх тата водитель çул-йĕр условийĕсене шута илменни. Тепĕр икĕ авари федераллă трасса çинче пулса иртнĕ. Юрать-ха çав инкексене лекнĕ виçĕ ачи те хăрушсăрлăх пиçиххийĕпе çыхăннă пулнă.

Çул çинчи инкексене тишкерсен вĕсем нумай чух водитель руль умне ÿсĕрле ларнăран тата пысăк хăвăртлăхпа çÿренĕрен пулни палăрать. Çакă водительсем яваплăх пирки шутламаннине кăтартса парать. Акă пĕлтĕр эрех ĕçсе руль умне ларнă 82 водителе тытса чарнă, пысăк хăвăртлăхпа çÿренĕшĕн инспекторсем 1882 протокол çырнă. Ку цифрăсем малтанхи çулхинчен пысăкрах.

Çуран çÿрекенсем те çул çинче хăйсене питĕ ирĕклĕ тытаççĕ. Çакă вара пачах та кĕтмен лару-тăру патне илсе çитерме пултарать. Иртнĕ çул 100 çынна асăрхаттарнă. Инспекторсен умне лекменнисем тата мĕн чухлĕ-ши?

Хамăр асăрханулăх чи малтанах хамăршăн пулнине ниепле те шутлама вĕренсе çитейместпĕр пулас-ха. Хăрушсăрлăх пиçиххине çыхни те, çул урлă палăртнă вырăнта каçни тата ытти йĕркене пăхăнни те – пĕтĕмпех штраф тÿлемелле ан пултăр-ха тенипе мар, хамăрăн пурнăçпах, хамăрăн хăрушсăрлăхпах çыхăннă. Анчах та кашни çын çакна ăнланса илтĕр тесен тĕслĕх вырăнне çын пурнăçĕнчен витĕмлĕреххине тата мĕн илсе кăтартмалла-ши?

Çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем ача сачĕсене те, шкулсене те тăтăшах çитме тăрăшаççĕ. Хăрушсăрлăх правилисене аса илтернипе пĕрлех çул çинчи синкерлĕ самантсене те тĕслĕх вырăнне илсе кăтартаççĕ. Ачасем, уйрăмах пĕчĕккисем, çакна, паллах, пĕтĕмпех тарăннăн ăнланса та çитеймеççĕ. Çавăнпа та ăнлантару ĕçне ытларах ашшĕ-амăшĕ туса пымалла.

Ашшĕ-амăшĕсем вара хăйсем те сахал мар тĕлĕнтереççĕ. Автоçул хĕррипе утнă чух нумайăшĕ ачисене çавăтса пырать. Ку – тĕрĕс. Анчах та хăйсем çул хĕррипе, ачисем вара – машинăсене çывăхарах утаççĕ. Утма такăртарах теççĕ-ши? Нимрен малтан ачисен хăрушсăрлăхĕ пирки шутламалла пек туйăнать те... Транспорт çуран утакан пек вăраххăн çÿременнине манмалла мар, çитменнине тата вăл вăхăтра чарăнаймасан та пултарать. Ачăрпа çул урлă каçнă чухне темĕнле васкасан та палăртнă вырăнтах каçмалла. Çул урлă тĕрĕс каçасси хăвăрăн йăлана кĕрсе çитеймен пулсан та ачăрсен йĕрке вырăнне пултăр тесе тăрăшмалла. Вĕсен ответлăхĕ, асăрханулăхĕ çакăн пек утăмсенчен пуçланать. Асăрханулă пулни вара ку таранччен никама та чăрмантарман-ха.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Сивĕ çанталăк шÿтлемест

## Тухтăр канашĕ

Çанталăк сивĕ те уяр тăрать. Çакă лайăх та – респираторлă вируслă инфекци чирĕсем ытла хăвăрт сарăлмĕç. Анчах та сивĕ çанталăкра хытă шăнасран тата ал-урасене, хăлхасемпе пите шăнтса ярассинчен асăрханмалла. Тĕрĕс асăрханма вара врач канашĕсем пулăшĕç.

Сирĕн çинче тăвăр та нÿрĕ атă-пушмак е тумтир пулни нуль градуслă тата уйрăмах çиллĕ çанталăкра ÿте шăнтса ярасси патне илсе çитерет. Çавăнпа та япаласене яланах çанталăка кура тăхăнмалла.

Кĕлетке хытă шăннине акă мĕн палăртать: чĕтретет, ÿте кăвакрах тĕс çапать, тута тĕссĕрленет, ăс-тăнпа шухăшлас вăй та, ÿт-пÿ температури те чакать. Çапла чухне ăша пÿлĕме кĕмелле. Сахалах мар сахăр янă чей (ытла вĕри пумалла мар) ĕçмелле, эрех мар. Мĕншĕн тесен эрех организмри ăшша татах та хăваласа кăларать.

Май пур пулсан ăшă шывра (20–25 градус) çăваннмалла та хыççăн ăшă çи-пуç тăхăнса утиялпа витĕнсе выртмалла.

Ÿте шăнтса янă чухне те ăшă пÿлĕме кĕме васкăр. Шăнтнă вырăнсене урампа та, пÿлĕме кĕрсен те юрпа сăтăрма юрамасть. Çав тĕле вĕри тата сивĕ япаласем те хумалла мар. Шăнтнă алăсене тÿрех вĕри батарейăсем çумне тытмалла маррине те пĕлмелле. Ку татах сиен кÿрет кăна. Пылаклă ăшă чей ĕçмелле, пĕр стакан кăна мар, темиçе ĕçни те аван.

Тарăннăн шăннă ÿт шуралнă е тата ăна кăвакрах тĕс çапнă пулсан, тÿрех ăшă пÿлĕме кĕме тăхтамалла. Унта кĕриччен малтан ăшă хатĕрпе пĕркентермелле. Кĕлетке хăйне хăй ăшăнма пуçлать. Кайран вара кĕмелле.

Шăнтнă вырăнсене ятарлă кремсемпе, сăмахран, облепиха çăвĕ пуррисемпе, сĕрмелле. Аптекăсенче вĕсене сутаççĕ. Е тата сивĕ чух урама тухас умĕн ятарлă кремсем сĕрни те пулăшать.

Енчен те эсир урамра шăнса кÿтнĕ çын вырттине курсан васкавлă медицина пулăшăвне чĕнмелле. Машина çитиччен вара асăннă сĕнÿсене шута илсе май пур таран пулăшу памалла.

Ÿте шăнтнă пулсан тÿрех мунчана кайма та юрамасть!

Сивĕ çанталăк тăнă вăхăтра калпаксăр, тутăрсăр çÿремелле мар, лайăх апатланмалла, витаминсем йышăнмалла. Сивĕ çанталăкра пирус туртни нимĕн чухлĕ те пулăшмасть, юн çаврăнăшĕшĕн сиенлĕ пулать çеç. Нумайрах хусканусем тума тăрăшмалла. Çуран утнă чух вăхăтран вăхăта лавккасене е ытти суртсене ăшăнма кĕрсе тухмалла.

Сивĕре тĕрлĕ диетăна тытассинчен хăтăлмалла, ун вырăнне лайăх апатланмалла. Ку вăл кунне пĕрре вĕри апат çинине пĕлтермест – кунĕпех апатлану рационĕ пуян пулмалла.

**А. АФАНАСЬЕВ,**
**травматолог врач.**

## Объявления

Я, собственник земельной доли Баранова Римма Петровна, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью 12800 кв. м., расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Дружба» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярабайкасинского сельского поселения, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:121301.

Я, собственник земельной доли Яшков Николай Валерьевич, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли общей площадью 25600 кв. м., расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Дружба» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярабайкасинского сельского поселения, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:121301.

Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории бывшего СХПК «Дружба» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемых в счет земельных долей, расположенных по адресу: ЧР, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, в северной части кадастрового квартала 21:17:121301.

Заказчики работ, собственники в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Баранова Римма Петровна, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Иштереки. Паспорт серии 9707 № 560720 выдан ТП УФМС России по ЧР в Моргаушском районе от 25.07.2007 г.; гр. Яшков Николай Валерьевич, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Иштереки. Паспорт серии 9708 № 624664 выдан ТП УФМС России по ЧР в Моргаушском районе от 12.05.2008 г.

Согласование местоположения границ состоится 27.02.2012 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

Я, собственник земельной доли Оленов Владимир Сергеевич, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью 25600 кв. м., расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Дружба» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярабайкасинского сельского поселения, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:121301.

Настоящим извещением уведомляю заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Дружба» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемых в счет земельных долей, расположенных по адресу: ЧР, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:121301.

Заказчик работ, собственник в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Оленов Владимир Сергеевич, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Вускасы. Паспорт серии 9704 № 112393 выдан ОВД Калининского района г. Чебоксары от 01.11.2003 г.

Согласование местоположения границ состоится 27.02.2012 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

* * *

**О внесении изменений в извещение о проведении открытого аукциона**

Администрация Моргаушского района извещает, что в извещении от 28.12.2011 года о проведении открытого аукциона, проводимого 31.01.2012 на право заключения договора купли-продажи муниципального имущества Моргаушского района во всех лотах вместо слов «Сумма задатка – 20% от начальной цены» следует читать «Сумма задатка – 10% от начальной цены».

## Прогноз погоды

| | среда 25 января | | | | четверг 26 января | | | | пятница 27 января | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -17 | -17 | -15 | -20 | -21 | -21 | -18 | -23 | -25 | -24 | -20 | -23 |
| Давление мм | 762 | 762 | 763 | 763 | 764 | 766 | 768 | 769 | 770 | 770 | 770 | 770 |
| Влажность % | 81 | 87 | 77 | 79 | 73 | 74 | 79 | 80 | 86 | 81 | 73 | 81 |
| Ветер м/сек | В 3 | В 4 | В 4 | В 3 | В 3 | В 3 | В 3 | В 3 | С-В 2 | С-В 2 | С-В 2 | С-В 2 |
| Солнце восход/заход | | 09:00 | 17:10 | | | 08:58 | 17:12 | | | 08:56 | 17:14 | |
| Луна восход/заход | | 09:17 | 20:19 | | | 09:32 | 21:34 | | | 09:46 | 22:47 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:091401:104, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Эхветкасы, для строительства и обслуживания магазина, площадью 35 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:020601:150, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Куськино, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5311 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

В объявлении собственника земельной доли Исаковой Маргариты Михайловны о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в райгазете «Çĕнтерÿ ялавĕ» от 13 ноября 2010 года в № 95 (7837), стр. 4, в 1 колонке, допущена опечатка. Вместо «116000 кв. м.» следует читать «11600 кв. м.».

## Пĕлтерÿсем. Объявления

**ЛЕСОПТОРГ реализует пиломатериалы:**
Доски: 50х100, 50х150, 50х200, 25х100, 25х150, 25х200 – 1 куб. м. от 5000 руб.
Изготовим сруб бани 3мх5м от 45000 руб. В наличии – сухие дрова.
Доставка бесплатно от 10 куб. м.
Тел.: 8-919-665-11-88, 8-905-343-91-07. 6-24.

Ĕне, вăкăр, тына, пăру, surăхсем туянатпăр.
Тел.: 8-903-063-07-57. 2-5.

* * *

Возьму в аренду торговую площадь для реализации алкогольной продукции на выгодных для вас условиях. Тел.: 8-919-679-72-71. Возьму в аренду торговую площадь на длительный срок. Тел.: 8-903-322-24-88. 10-10.

* * *

Бригада строителей, отделочников с опытом работы в Москве и Московской области предлагает свои услуги по ремонту квартир, строительству домов, коттеджей и бань. Тел.: 8-927-863-62-25. Владимир.

* * *

Продаю сено тюкованное, коробка передач на трактор Т-16. Тел.: 8-927-848-28-48.

* * *

Бурение колодцев, скважин. Колодезные кольца, крышки днища. Доставка, установка.
Тел.: 8-927-668-96-96. 3-5.

* * *

При МАУ ДОД «ДЮСШ–ФСК «Сывлăх» набирается учебно-тренировочная группа из девочек и мальчиков по плаванию (акватлон: бег+плавание) 2001-2002 г. р. Тренер-преподаватель – кандидат в мастера спорта России Смирнова Марина Михайловна. Ежедневно с 14-00 час. Тел.: 62-2-85.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-10.

26 и 27 января с 9-00 ч. Медицинский центр г. Чебоксары проводит медицинский осмотр состояния здоровья человека при помощи передовой компьютерной экспресс-диагностики в помещении Дома быта с. Моргауши (2 этаж). С вами работает высококвалифицированный врач Самакова Надежда Ивановна. Запись по тел.: 62-8-56. Оплата 450 руб.
Лицензия Д 231533 Рег. № 74 от 06.06.2003 г. 8-906-385-83-77.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060401:569, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, для прудового хозяйства, площадью 2731 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1225, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 4998 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1224, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1223, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:060401:570, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 9790 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

* * *

**Заключение публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

21 января 2012 года в администрации Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики прошли публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

Приняты следующие рекомендации участников публичных слушаний:

1. Одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

Председательствующий,
глава Юнгинского сельского поселения Моргаушского района
Чувашской Республики В.В. ФОМИН.

**ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА МОРГАУШСКИЙ РАЙОН**
**АДМИНИСТРАЦИЯ БОЛЬШЕСУНДЫРСКОГО СЕЛЬСКОГО ПОСЕЛЕНИЯ**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**23.01.2012 г. №5**
**село Большой Сундырь**

**О проведении внесении публичных слушаний по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со статьей 28 закона Российской Федерации от 06.10.2003г. № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст.14 Устава Большесундырского сельского поселения Моргаушского района постановляю:

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» с кадастровым номером 21:17:060402:264 27 февраля 2012 года в 10 часов 00 минут в администрации Большесундырского сельского поселения, по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Б. Сундырь, улица Советская 16.

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Çĕнерÿ ялавĕ»

**Глава администрации Большесундырского сельского поселения А.В. ЛАПТЕВ.**

**Проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

Руководствуясь п. 10 ст. 3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учётом результатов публичных слушаний администрация района постановляет:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:060402:264 из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Республика Чувашия, район Моргаушский, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, улица Новая, дом № 23, с разрешенного использования «для ведения личного подсобного хозяйства» общей площадью 31 кв.м. на «для строительства и содержания торгового павильона».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Большесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 27.02.2012 года до 9-00 часов.

**Глава администрации Большесундырского сельского поселения А.В. ЛАПТЕВ.**

Родные и близкие, проживающие в д. Пикикасы, глубоко скорбят вместе с Борисовой Т.Н. в связи безвременной кончиной ее мужа
**БОРИСОВА**
**Николая Алексеевича.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат**
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврăса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрах хисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 24.01.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4520.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.